Подписан: Петров Александр Олегович
DN: C=RU, OU=Директор, O=" МБОУ ""Чиричкасинская ООШ"" ЦИвильского района", CN=Петров Александр Олегович, E=chirichkasi@mail.ru
Основание: Я являюсь автором этого документа
Местоположение: место подписания
Дата: 2021.09.03 12:45: 39+03'00'

*Приложение*
*к основной образовательной программе*
*начального общего образования в новой редакции,*
*утвержденной приказом*
*директора МБОУ «Чиричкасинская ООШ»*
*от 30 августа 2021 г. № 69б*

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

начального общего образования

***по литературному чтению (на чувашском языке)***
составлена
группой учителей начальных классов
МБОУ «Чиричкасинская ООШ»:

***Евдокимовой Надеждой Витальевной,***
***Никифоровой Реной Александровной,***
***Ивановой Валентиной Васильевной,***
***Васильевой Людмилой Герасимовной.***

Срок реализации: 4 года

# Ăнлантарса пани

Ку ĕç программине федераллă патшалăх шайĕнче йышăннă çĕнĕ вĕрентӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕн, «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн 1-4 классем валли М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р. Кульева – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013, (1-4 классем валли) тĕпе хурса хатĕрленĕ.

**Задачисем:**

-ача çитĕнсе çитнĕ тĕле мĕнпур этемлĕхĕн çырулăх пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме пултартăр;

-тĕнче литературин пӳлминче чăваш литературин тӳпи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнкартăр;

-хайлава туллин ăнланма ăна хайланă чухнехи евĕрех йывăррине асăрхатăр;

-кирек хăш хайлав та пысăк шыравра çуралнине, вăл çыравçă пуçĕнче шăранса калăпланнă, шухăшласа кăларнă япала иккенне тĕшмĕрттĕр;

-хăй те хайлав ĕçне явăçма сĕмлентĕр;

-ача-пăча ăс-тăн тĕлĕшĕнчен çеç мар, кăмăл-сипетпе туйăм-сунăм тĕлĕшĕнчен те тасалса пуянлантăр.

**Усă куракан кĕнекесем:**

1. Т.В.Артемьева, О.И.Печников/ Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ: Литература вулавĕ. 1-мĕш класс валли. 1-мĕш кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.
2. Т.В.Артемьева, О.И.Печников/ Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ: Литература вулавĕ. 1-мĕш класс валли. 2 -мĕш кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.
3. А.Р.Кульева, О.Г.Кульев/ Чĕвĕлти: Хушма вулав кĕнеки. 1-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.
4. Артемьева Т.В. Литература вулавĕ: Ешĕл калча. 2- мĕш класс валли / Т.В.Артемьева, О.И.Печников.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
5. Кульева А.Р. Ылтăн шевле: хушма вулав кĕнеки. 2-мĕш класс валли/ А.Р.Кульева, О.Г.Кульев – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
6. Артемьева Т.В. Литература вулавĕ: Ылтăн пучах. 3- мĕш класс валли / Т.В.Артемьева, О.И.Печников.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
7. А.Р.Кульева,Э.В.Анатольева,И.А.Федорова. Асамат кĕперĕ.Хушма вулав кĕнеки, 3-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кенеке изд-ви.
8. Т.В.Артемьева, О.И. Печников, Пучах çумне пучах, 4 – мĕш класс, Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви.
9. О.Г. Кульев. Мерчен. Хушма вулав кĕнеки, 4-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.

**Ачасем усă куракан пособисем:**

**1.** Т.В.Артемьева, О.И.Печников «Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ: Литература вулавĕ» (1-мĕш класс. 1-мĕш кĕнеке) учебникпа ĕçлемелли ĕç тетрачĕ – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.

**2.** Т.В.Артемьева, О.И.Печников «Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ: Литература вулавĕ» (1-мĕш класс. 2-мĕш кĕнеке) учебникпа ĕçлемелли ĕç тетрачĕ – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.

**3.** Пĕчĕккисен кĕнеки: Хрестомати./ Т. В. Артемьева, Г. Ф. Трофимов пухса хатĕрленĕ.- 2 –мĕш кăларăм, хушса çĕнетнĕ.- Шупашкар:Чăваш кĕнеке издательстви.

**Усӑ куракан методика пособийӗсем:**

1.Тӑван чӗлхепе литература вулавӗн тӗслӗх программисем. Чӑваш шкулӗн 1-4 класӗсем валли. М. К. Волков, Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева, О. И. Печников, А. Р. Кульева.- Шупашкар, Чӑваш Республикин вӗрену институчӗн издательство центре, 2013»

2..Артемьева Т. В. Литература вулавӗн урокӗсем. 1-мӗш класс: меслет сӗнӗвӗсем/ Т. В. Артемьева, О. И. Печников.- Шупашкар:Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн издательство центрӗ.

3.Артемьева Т. В. Литература вулавӗн урокӗсем. 2-мӗш класс: меслет сӗнӗвӗсем/ Т. В. Артемьева, О. И. Печников.- Шупашкар: Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн издательство центрӗ.

4. Артемьева Т. В. Литература вулавӗн урокӗсем. 3-мӗш класс: меслет сӗнӗвӗсем/ Т. В. Артемьева, О. И. Печников.- Шупашкар:Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн издательство центрӗ.

5. Артемьева Т. В. Литература вулавӗн урокӗсем. 4-мӗш класс: меслет сӗнӗвӗсем/ Т. В. Артемьева, О. И. Печников.- Шупашкар:Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн издательство центрӗ.

**Электронлӑ ресурссем:**

1. **Чӑваш чӗлхи, 2, 4 класс. СД- диск**
2. **Чӑваш букварӗ, 1 класс. СД- диск**
3. **Чӑваш халӑх сайчӗ.**

**https://chuvash.su/wiki/Чӑваш%20чӗлхи**

## Кӗтекен результатсем

### ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВӖ

### КЛАСС ТУЛАШӖНЧИ ВУЛАВ ҪИНЕ ТАЯНСА ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ

Литература вулавӗн урокӗсем 1 класра пуҫланаҫҫӗ те 4 класс таранчченех тӑсӑлаҫҫӗ. Пӗрремӗш класра пӗрремӗш ҫур ҫулта, ачасен вулав хӑнӑхӑвӗсем йӗркеленсе ҫитеймен пирки, урокра усӑ курмалли тӗп меслет- хайлавсене итлесе йышӑнасси. Вӗрентӗвӗн тӗп тӗллевӗ - ачасене литература хайлавӗсемпе кӑсӑклантарса ярасси, илемлӗ хайлавсене итлесе ӑнланма, ӑса хывма вӗрентсе пырасси. Чӑн литература вулавӗ, ачасем кӑшт-кашт вулама хӑнӑхсан, иккӗмӗш ҫур ҫулта пуҫланать.

Пуплевпе шухӑшлавӑн тӗп ӗҫ-хӗлӗсенчен пӗри пулнӑран вулав пуҫламӑш классемшӗн пысӑкран та пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Вӑл кӗҫӗн ҫулхи шкул ачине ӑнӑҫлӑ вӗренме, ырӑ кӑмӑл-туйӑмлӑ ӳсме, ӑс-тӑнне пур енлӗн аталантарма пулӑшмалла. Литература вулавӗн урокӗсен тӗп тӗллевӗсем ҫаксем: вӗренекенсен пирвайхи вулав ӑслайне, унӑн тӗрӗслӗхӗпе хӑвӑртлӑхне, ӑнланулӑхӗпе палӑртулӑхне куллен лайӑхлатасси; ачасене хайлава туллин ӑнланма хӑнӑхтарасси, вӗсен ырӑпа усала уяс туйӑмне, илем сисӗмне амалантарасси, тӗнче курӑмне анлӑлатасси; текстпа ӗҫлеме вӗрентесси, кӗнекене харкам тӗллӗн вулама хавхалантарасси.

Паянхи пурнӑҫ литература вулавӗ умне ҫӗнӗ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ: ача ҫитӗнсе ҫитнӗ тӗле мӗнпур этемлӗхӗн ҫырулӑх пуянлӑхне ӑнланма, хисеплеме, унпа киленме пултартӑр; тӗнче литературин пӳлминче чӑваш литературин тӳпи те палӑрмаллах пысӑк пулнине ӑнкартӑр; хайлава туллин ӑнланма ӑна хайланӑ чухнехи евӗрех йывӑррине асӑрхатӑр; кирек хӑш хайлав та пысӑк шыравра ҫуралнине, вӑл ҫыравҫӑ пуҫӗнче шӑранса калӑпланнӑ, шухӑшласа кӑларнӑ япала иккенне тӗшмӗрттӗр, хӑй тсе хайлав ӗҫне явӑҫма сӗмлентӗр; ача-пӑча ӑс-тӑн тӗлӗшӗнчен ҫеҫ мар, кӑмӑл-сипетипе туйӑм-сунӑм тӗлӗшӗнчен те тасалса пуянлантӑр.

**Харкамлăх (личностные):**

- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхне уçăмлани;

- ачасем тăван çĕршыв, тăван халăх, тăван чĕлхе, литература ăнлавсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;

- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăмĕ

йĕркеленсе пыни;

- харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн явапла пулма хăнăхса пыни;

- шкулта, класра, урамра, килте, хăнара хăвна мĕнле тытмаллине, уроксене мĕнле хатĕрленмеллине, ĕç вырăнне хатĕрлемеллине, парта хушшинче мĕнле лармаллине, ĕç хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине, ĕçе тăрăшса, тимлĕ, тирпейлĕ тумаллине ăнланни;

- тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни;

- хайлавсенчи сăнарсен лайăх тата начар енĕсене шута илни;

- пĕчĕккĕн аслисемпе пĕрле ĕçе хăнăхса пымаллине, пурнăçра çак хăнăхусем кирлĕ пулассине ăнланни;

- ĕмĕтленни, вĕренни пурнăçра кирлĕ пулние тавçăрни.

- шкулта вĕренни пĕлÿ пухмалли, аталанмалли, харпăр хăй пурнăçне кăсăклăрах, усăллăрах тума вĕренмелли тĕп мел пулнине ăша хуни;

- ачан кăмăл-сипечĕ çырĕпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, çынпа ырă пулмаллине, çынсем хушшинче хăвна мĕнле тытмаллине, чĕр чунсене юратмаллине ăнланса илни;

- шухăшлав ăслайĕсем туптанни.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)**

***Пĕлÿлĕх(познавательные):***

- итленĕ е вуланă чух мĕнле лармаллине тата урокра кирлĕ хатĕрсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;

- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;

- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни; çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни;

- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;

- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;

- ачан тавракурăмĕ анлăланни: çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни;

- туйăм культури çивĕчленни: кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавçăра пуçлани;

-пысăк, пĕчĕк, тан услăха курни, логикăллă шайлаштарайни;

- вĕренÿ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;

- вĕренÿ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене,паллăсене ăнланни;

***Йĕркелÿ-хаклав(регулятивные):***

- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тищкерейни тата пахалайни;

- тишкерÿ – пĕтĕçтерÿ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;

- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;

- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышнни;

- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;
- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;
- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

***Хутшăну(коммуникативные):***

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;

-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;

- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, tарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;

- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;

- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплевре тытса пырайни;

- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;

- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;

- хутшăну пуплевĕ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма пултарни;

- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;
- сăмах йышĕ пуянланни;
- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

***Предметăн пайрам (предметные) результачĕсем:***

- илемлĕ хайлавсене йышăнма, итлеме-ăнланма малалла хăнăхса пыни;
- «халăх сăмахлăхĕ», «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;

- чĕнӳ-йыхрав юррисемпе паллашса вĕсене мĕнле тĕллевпе каланине палăртма пултарни, мĕнле йĕркеленине сăнама пĕлни;

- шутлав сăввисем тахçан авал пулса кайнине ăнланни;
- тупмалли юмахсен хăйевĕрлĕхне, тытăмне сăнама пĕлни;

- илемлĕ хайлав мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару) уйăрса илме пĕлни, вĕсене тупмалли юмахсенче тупайни; тупмалли юмахсем хайланă чухне çак мелсемпе усă курма пĕлни;

- «юмах» жанрăн хăйевĕрлĕхне ăнланса илни; юмах логикипе сюжетне сăнама пултарни; юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçăмлама ăнтăлни;

- «илемлĕ литература», «хайлав», «автор» ăнлавсене уçса пама пултарни;
- «калав», «сăвă» ăнлавсене уçăмлайни;

- сăвăласа çырнă хайлавсен тулашĕ, вĕсен хăйевĕрлĕхне сăнаса курма, «рифма», «ритм» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;

- сăвăри йĕрке вĕçĕсем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăрани çеç çителĕксĕр, шухăш уçăмлăхĕ те пулмаллине ăнланни;

- калава ансаттăн тишкерме вĕренни;
- сăвăласа çырнă хайлавсене туйма-ăнланма (восприятие) вĕренни;
- автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланни;
- калав мĕн çинчен пулнине ăнланни, калав темине уçăмлама вĕренни;
- калав теми унта мĕн çинчен каланипе çыхăнса тăнине ăнланни;

- илемлĕ хайлавсенчи шӳте ăнланма пĕлни.

**Пĕрремĕш класăн 1-мĕш çур çулĕнче** ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки литература итлевĕсем пулаççĕ. Литература итлевĕн тĕп тĕллевĕсем тесе çаксене палăртатпăр:

— ачасене литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ăнланма, ăса хывма вĕрентсе пырасси;

- ачасенче ырăпа усала, хурапа шурра туяс туйăма, илем сисĕмне амалантарса ярасси, тĕнче курăмне анлăлатасси;

— ачасен ăнлав пултарулăхне амалантарасси.

Вĕрентӳ задачисемпе пулас результачĕсене, йĕркелеме палăртнă компетенцисене шута илсе ĕçе 4 тапхăра пайлама пулать.

Пĕрремĕш класра литература вулавне вĕрентнĕ май çак результатсене планлама пулать.

***Харкамлăх результачĕсем:***

- вĕренекенсен социаллă тата кăмăл-сипет опычĕ пуянланни;

- ачасем çитĕннĕ май этемлĕхĕн литература пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;

- вулав хатĕрĕсем урлă ачасен чунĕнче гражданлăхпа патриотлăх, çынлăх, тивĕçлĕхпе яваплăх туйăмĕсем аталанса пыма пуçлани, пурнăçра лайăххипе япăххине, ыррипе усаллине чухлама ăнтăлни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- вĕренекенсем ăс-тăн тĕлĕшĕнчен аталанса пыни;

- пуплев ĕç-хĕлĕн пур тĕсĕсем те аталанса пыни; ятарлă ăнлавсемпе терминсен пĕлтерĕшне уçăмласа ăса хывма хăнăхса пыни;

- ачасен ăслав ĕçĕпе кăсăкланма пуçлани;

- вĕренӳ ăслай-хăнăхăвĕсем йĕркеленме пуçланни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

- ачасен хăйсен ӳсĕмне тивĕçтерекен литература хайлавĕсене итлес-вулас кăмăлĕ амаланни;

- калăпăшĕпе пысăках мар, ансат сюжетпа интригăллă, ансат жанрлă илемлĕ хайлавсене тăнласа е вуласа ăнланма, туйса илме вĕренсе пыни;

- илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланни. Проза тата поэзи хайлавĕсен хăй евĕрлĕхне туйма вĕренни;

- литература жанрĕсем çинчен пĕтĕмĕшле ăнланăвĕ калăпланма пуçланни;

-илемлĕ хайлавпа ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем калăпланни, хайлавсен содержанине ăса хывмалли тата асăмламалли мелсене вĕренсе пыни;

-ача хăй те хайлав ĕçне явăçма сĕмленни.

**2-мĕш класс Литература вулавĕ.**

***Харкамлăх результачĕсем:***

- сăмах искусствипе киленме вĕренсе пыни;

- тăван халăх тата кӳршĕ халăхсен культурине хисеплеме, пуринпе те тӳсĕмлĕ те çураçуллă пулма хăнăхса пыни;

- илемлĕ хайлавсем вуланă-тишкернĕ май ачасен илем туйăмĕ аталанни, вĕсен илем пахалăхĕсене ăша хуни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- тĕрлĕ хайлав тишкернĕ май хăйсен тата ыттисен ĕç-хĕлне сăнама, хаклама хăнăхма пуçлани:

- вуласа е итлесе пĕлнĕ информацие аса хывма, асăмлама вĕренсе пыни;

-măшăршарăн, ушкăнпа пĕрле ĕçлеме — хăйсем хушшинче рольсемпе ĕçсене уйăрма, пĕрлĕхлĕ ĕçĕн харкам пайне пурнăçлама вĕренме пуçлани.

***Предметăн пайрам результачĕсем :***

- вулав пахалăхĕсем çирĕпленни, вулав тĕсĕсемпе мелĕсене алла илсе пыни;

- сасăллă пуплевĕн пĕлтерĕшлĕ мелĕсене (хăвăртлăхĕ, янăравлăхĕ, кĕвĕлĕхе) кирлĕ пек улăштарма вĕренни;

- текст тишкерĕвне малалла вĕренсе пыни;

- ансат жанрсене (юмах, калав, сăвă) пĕр-пĕринчен уйăрса илме пултарни;

— хăш-пĕр илемлĕх мелĕсене (танлаштару, эпитет, метафора) курма-сăнама тытăнни;

- литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе паллашни.

**3 мĕш класс. Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав**

***Харкамлăх результачĕсем :***

- тăван халăхăн авалхи кун-çулĕпе, унăн тĕрлĕ тапхăрта палăрнă ывăл-хĕрĕпе, вĕсен пархатарлă ĕçĕсемпе паллашнă май харкам мĕнле халăхран тухнине ăша хуни, çакăнпа мăнаçланас туйăм çирĕпленни;

- тăван халăх культурин, халăх сăмахлăхĕн тытăмĕпе ăшлăхĕ мĕн тери пуян пулнине курма, несĕлĕмĕрсем ăна ĕмĕрсем хушши упраса, туптаса паянхи куна çитерме пултарнине ăса хывма пуçлани.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:*** - словарьсемпе, справочниксемпе усă курма вĕренсе пыни;

- кĕнекепе ирĕклĕн ĕçлеме пĕлни: уйрăм палăртусемпе, тупмаллисемпе усă курса кирлĕ текста, унти палăртнă вырăнсене хăвăрт тупса сĕннĕ ĕçсене пурнăçлани;

- тĕрле информаци çăл куçĕпе уса курма пултарни;

- кĕнекепе, словарьсемпе, справочниксемпе, текст патне панă иллюстрацисемпе ĕçлеме хăнăхса пыни;

- вулавăн тĕрлĕ тĕсне (паллашуллă, тĕпчевлĕ-тишкерӳллĕ, суйлавлă, шыравлă) алла илсе пыни;

- măшăррăн, пĕчĕк ушкăнпа, пĕрле ĕçлеме - хăйсем хушшинче рольсемпе ĕçсене уйăрма, пĕрлĕхлĕ ĕçĕн харкам пайне пурнăçлама вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

- текстпа ĕçлеме пултарни: темипе тĕп шухăшне палăртни, тишкерӳ ыйтăвĕпе çыхăннă информаци тупни;

- пĕтĕмлетӳсем патне пыма, пулăмсемпе сăнарсен хăтланăшĕсен çыхăнăвĕсене ăнланма, сăлтавлама вĕренсе пыни;

- текстра геройсен шухăшне çирĕплетекен вырăнсене тупма пултарни.

— сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл-туйăмне тишкернĕ-сăнанă май пĕтĕм этемлĕх ырлăхĕсемпе пахалăхĕсене ăша хывас, ырăпа усала уяс хăнăхусем аталанса пыни;

- илемлĕ литература жанрĕсен (тĕрлĕ юмах, калав, сăвă, юптару) тĕп уйрăмлăхĕсене курма вĕренсе пыни.

**4 мĕш класс. Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав**

***Харкамлăх результачĕсем:***

— вулав харкам аталанăвĕшĕн мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланни;

- тĕнче литература пӳлминче чăваш литературин тӳпи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнланса пыни;

- этемлĕх çырулăхĕн пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;

- ачасен вулав пултарулăхĕ çирĕпленнипе пĕрлех хайлавçă пултарулăхĕ те амаланса пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- пĕр ыйтупах тĕрлĕ позици пулма пултарнине ăнланни, вĕсенчен пĕрне суйласа илме е хăйĕн урăхла шухăшне палăртма вĕренни;

- литература вулавĕн предмечĕн шалашĕнче проектсем пурнăçланă май вĕренӳ задачисем лартма, вĕсене татса памалли çулйĕр палăртма вĕренсе пыни;

- илемлĕ литература тăван халăх культурин пĕлтерĕшлĕ пайрамĕ пулнине ăса хуни, илемлĕ литература хайлавĕсене ӳнер единици пек йышăнма вĕренсе çитни.

***Предметăн пайрам результачĕсем :***

— фольклор хайлавне автор хайлавĕнчен уйăрса илме, проза жанрĕсене (юмах, калав, повесть) уйăрма, тĕп паллисене палăртма пĕлни;

- текстра илемлĕ сăнарлăх мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару, эпитет, тепĕр хут калани, рифма, сасă çырăвĕ) тупма пултарни;

- илемлĕ текстпа ансат ăслăлăх тексчĕсен уйрăмлăхĕсене палăртма пĕлни;

- хайлав ăшлăхне пĕр тĕвĕре (завязка — ĕç аталанăвĕ — кульминаци — развязка; ĕç пуçламăшĕ — ĕç аталанăвĕ — чи хĕрӳллĕ самант — ĕç вĕçĕ) курма пултарни;

-героя, унăн хăтланăвĕ тата текстра тӳррĕн панă характеристики тăрăх хак пама, геройсене хак пани тăрăх автор вĕсем çине мĕнле куçпа пăхнине чухлама пĕлни;

-литература хайлавĕ çинчен ансат каласа пама (вăл халăхăн е авторăн хайлавĕ, унăн тĕсĕ (проза, поэзи, драма), жанрĕ (юмах, повесть-юмах, калав, былина, миф, халап, сăвă, пьеса), сюжетри тĕп йĕрсем, хайлавăн тĕп шухăшĕ) пĕлни;

- авторпа, унăн пултарулăхĕпе кĕскен паллаштарма (писатель, поэт; пирĕн вăхăтри е маларахри саманасенче пурăннă; мĕн çинчен çырать е çырнă) пултарни;

— авторăн тата харпăр хăйĕн кăмăлне палăртса литература хайлавĕн персонажĕсене хак пама пĕлни.

**Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)**

**1 класс**

**Пĕрремĕш класăн 1-мĕш çурçулĕнче** ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки литература итлевĕсем пулаççĕ. Литература итлевĕн тĕптĕллевĕсем тесе çаксене палăртатпăр:

- ачасене литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ăнланма, ăса хывма вĕрентсе пырасси;

- ачасенче ырăпа усала, хурапа шурра туяс туйăма, илем сисĕмне амалантарса ярасси, тĕнче курăмне анлăлатасси;

- ачасен ăнлав пултарулăхне амалантарасси.

Вĕрентъ задачисемпе пулас результачĕсене, йĕркелеме палăртнă компетенцисене шута илсе ĕçе 4 тапхăра пайлама пулать.

**1 тапхăр.** Илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланасси; проза тата поэзии хайлавĕсем. Вĕсене итлеме-тăнлама, йышăнма вĕренсе пырасси.

**2 тапхăр.** Халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем. Юмахсем. Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсем сăмах вĕççĕн вĕренине: вĕсен авторĕ çуккине ăнланасси.

**3 тапхăр.** Вак жанрсемпе паллашасси, вĕсен тĕслĕхĕсене итлесси. Тупмалли юмахсемпе пулмасла халапсем хайласси.

**4 тапхăр.** Литература жанрĕсем (калав тата сăвă), вĕсене уйăрма, вĕсен уйрăмлăхĕсене ăнкарма, тĕслĕхĕсене итлеме-тăнлама, йышăнма вĕренсе пырасси.

**Иккĕмĕш çурçулта** ачасем пуçламăш вулав хăнăхăвĕсем туянса çитереççĕ. Вĕсен итлев хăнăхăвĕсем калăпланнă теме пулать.

Литература вулавĕ темиçе тĕллеве пĕрлĕхлĕн пурнăçа кĕртме май панине (вулама, текстпа ĕçлеме тата литература хайлавне ăнланма, тишкерме вĕрентесси;

кěнекене юратма, унпа ĕçлеме, харпăр хăй тěллěн вулама хăнăхтарасси) шута илсе уроксен пайрам тата харкам тěллевěсем анлăланаççě. Анчах та вěсем пěрремěш çур çултисенчен пачах, принциплă уйрăлса тăмаççě. Вěсем çинче никěсленсе вěсен анлăрах та тарăнрах тăсăмě пулаççě.

Иккěмěш çурçулти уроксене, вěсен тěллевěсемпе задачисене, йěркелемелли ăслай-ăнланусене (компетенцисене) шута илсе тěпренилсен 2 тапхăра уйăрма пулать.

***1 тапхăр.*** Халăх сăмахлăхě.

Иккěмěш çурçулта ачасен халăх сăмахлăхне вěренесси самай анлăрах пулмалла; жанр тěлěшěнчен те, пěлъ-ăслай тěлěшěнчен те.

***2 тапхăр.*** Литература тěсěсем (жанрěсем) (калав, сăвă, юптару).

**2 класс**

**Литература вулав\.Класс тулаш\нчи вулав (102 сехет)**

Вулав карти? М.н-ши вăл Тăван =.ршыв**?** Савнă =.р: Чăваш =.ршыв.? Пир.н =.ршыври хуласемпе ялсем? Тăван республика =ыннисен .=.-х.л.? «Пир.н ял (хула)» экскурси?

К.ркунне? К.р.н т.рл. тапхăрне (пу=ламăш.: ылтăн к.ркунне: хура к.ркунне): ч.рчунсемпе \сен-тăрансен пурнă=.нчи улшăнусене сăнлакан калавсемпе сăвăсем? «К.рхи сăнсем» экскурси?

Эпир – туслă ачасем? Ачасен пурнă=.пе .=.-х.л.: в.сем туслă пулни: п.р-п.рне пулăшни?

,= телейте савăнă= к\рет? ,= =инчен: т.рл. професси =инчен: .=.н пурнă=ри п.лтер.ш.: халăх пурлăх.ш.н тăрăшни: .= =ыннателей к\ни =инчен =ырнă калавсемпе сăвăсем?

Х.лле? Х.ллехи =анталăк? Ч.рчунсемпе \сен-тăрансен х.ллехи пурнă=.? ç.н. =ула к.тсе илни? «Х.л =итсен» экскурси?

Ч.рчунсем – пир.н туссем? Ч.рчунсем =инчен =ырнă калавсем: сăвăсем: ваттисен сăмах.семпе туптарусем (тупмалли юмахсем)? Ч.рчунсене х\т.лесси: в.сене пулăшасси?

Халăх сăмахлăх.? Чăваш тата ытти халăхсен юмах.сем: юррисем: ваттисен сăмах.семпе туптарусем?

Тăван кил-йышра? Пир.н нес.лсем? Аннесемпе асаннесем: кукамайсемпе аппасем: в.сен .=.-х.л.? Аннесем =инчен =ырнă калавсемпе сăвăсем?

Килч. ырă =уркунне? Ч.рчунсемпе \сен-тăрансен пурнă=.нчи улшăнусем? Пăр кайни? Ачасен вăййи-кулли? Аслисен =урхи .=.сем? Космонавтика кун.? Космонавтсем =инчен?

çу уйăхне к.т.м.р? çуллахи =ут =анталăк: уй-хирти тата пахчари .=сем =инчен =ырнă калавсемпе сăвăсем: т.рленч.ксем?

/сен-тăран т.нчи? Вăрман пурнă=.: \сен-тăран =инчен =ырнă сăвă-юрă: калавсемпе халапсем?

Пăхмасăр калама в.ренмелли сăвăсем% =ут =анталăк: тăванен: тус-тăванлăх: т.рл. ч.рчун =инчен калакан 5_6 сăвă (в.рент\=. с.ннисем тата ачасем хăйсем кăмăлласа суйланисем)?

Вулав хăнăхăв.сем? Т.р.с: ăнланса: п.р тик.сс.н: сăмахсене вакламасăр (кăткăс тытăмлă сăмахсене _ сыпăкласа) вуласси? Вулав хăвăртлăх. – минутра 50 сăмахран кая мар (ăшра вуланă чухне сăмах шуч. 60 таран \смелле)? Вуланă чух шухăша пăсмасăр: т.р.с чарăнусем туса сывлăш =авăрса ярасси? Хутсăр предложенин пур т.с.сене те т.р.с интонаципе вуласси? Шухăшпа т.ллеве кура текста хăвăрт е хуллен: сасса хăпартса е хăпартмасăр вуласси?

Текстпа .=лесси? çыхăнуллă пуплеве аталантарасси? Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси: каланине текстри предложенисемпе =ир.плетесси? Текста пахаласси: ăна в.рент\=. ыйтăв.сем е к.некери \керч.кл. план тăрăх аса илсе каласси?

Вуланă текст тăрăх сăмахлă \керч.ксем тăвасси? Пысăках мар калав шалăшне (содержанине) пăтраштармасăр: й.ркипе аса илесси?

Кĕнекери ÿкерчĕксем мĕне сăнланине: вĕсем калавăн хăш пайне кăтартнине палăртасси: çав вырăна текстра тупасси.

Калаватемиçе пая уйăрасси, вĕсене ят парасси, вуланă текстăн тĕп шухăшне палăртасси (вĕрентÿçĕ пулăшнипе).

Илемлĕх мелĕсене – танлаштарусене. эпитетсене. метафорăсене (терминсене асăнмасăр) – сăнасси.

Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене танлаштарасси, ун пек сăмахсене вĕрентÿçĕ пулăшнипе тупасси. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тĕрĕс ăнланасси. Вĕрентÿçĕ пулăшнипе текстра тĕрлĕ пулăма, çынна, çут çанталăка сăнарлăн кăтартакан сăмахсене тупасси, вĕсемпе сăмахлă ÿкерчĕксем тунă чух усă курасси. тавралăха сăнасси, тантăшсемпе выляни çинчен пĕчĕк калав хайлассси.

Юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илме пĕлесси.

Сасăллă пуплевĕн (калаçăвăн) пысăк пĕлтерĕшлĕ мелĕсене – хăвăртлăха, янăравлăха, сасă хулăнăш-çинçĕшне, кĕвĕлĕхне кирлĕ пек улăштарма вĕренесси. Сăмахсене тĕрĕс каласси.

Вулав кĕнекипе ĕçлеме хăнăхтарасси. Тупмаллипе паллаштарасси, кирлĕ калав е сăвă ятне шыраса тупма вĕрентесси. Хайлав хыççăнхи ыйтусемпе ĕçсене пурнăçласси (вĕрентÿçĕ пулăшнипе).

**КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ**

Вулав материалĕ. Ача-пăча валли кăларнă 8-30 страницăллă кĕнекесем. Ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра тата тепĕр хут саспа суйласа вуламалли сăвăсем, юмахсем, калавсем (калăпăшĕ – 5 страница таран).

Вулав тематики. Чăваш çĕршывĕ, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕсем, чĕрчунсемпе ÿсен-тăран çинчен. Тем те пĕр курса çÿрени. Юмахсем.

Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси. Кĕнекен тĕп пайĕсене. вĕсен ячĕсене (хуплашка, страницăсем, тупмалли) пĕлесси.

Кĕнекене мĕн çинченнине ячĕпе авторĕ, ÿкерчĕкĕсем тăрăх ăнкарасси (I çурçул), мĕн е кам çинчен итленине. вуланине ыйтсан тĕрĕс хуравласси.

4-5 кĕнекене темине кура ушкăнласа уйăрасси, вулав темине палăртасси, кĕнекене унăн хăйне евĕр паллисем тăрăх суйласа илесси. I çур çулта – итленĕ текста, II çур çулта – харпăр хăй тĕллĕн вуланине аса илсе ыйтусем тăрăх каласа парасси. Тĕрлĕ пулăма, сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланкалăшĕсене тĕрĕс хак парасси. Кĕнеке куравĕпе, сĕнĕ плакачĕпе (I çурçул). хуплашкасен картотекипе тата ансат каталог карточкипе (II çурçул) паллаштарасси.

I-II класра тăтăшах курнă ача-пăча кĕнекисен авторĕсене тĕрĕс аса илесси.

Ачасен харпăр хăй тĕллĕн кĕнеке вулас кăмăл туртăмне вăйлатасси, класри вулавçă кĕтесне тирпейлесе тăма хăнăхтарасси. ун çинее таянса тĕрлĕрен литература вăйийипе паллаштарасси. Вуланă хайлавсен уйрăм пайĕсене куç кĕрет выляса кăтартасси.

**3 класс**

**Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав (102 сехет)**

Вулав карти. Чăваш çĕршывĕ, чăвашсен илемĕ, юхан шывĕсемпе вăрманĕсем, чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хушшинчи туслăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни.

Кĕркунне. Кĕрхи çут çанталăк. çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. «Кĕрхи çут çанталăк» экскурси.

Тăван тавралăха, çут çанталăка упрани, илем кĕни – Тăван çĕршыва сыхланиех. Çынсем тăван тавралăха упрама, илем кÿме тăрăшнине, çак ĕçе ачасем те хутшăнма пултарнине сăнлакан калавсемпе сăвăсем.

Эпир – сăпайлă ачасем. Ачасен пурнăçĕ, вĕсен туслăхĕ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлĕ тытма тăрăшнине, аслисене хисепленине, сăпайлă пулнине сăнлакан калавсем, сăвăсем. Статьясем.

Асамçă хĕл. Хĕллехи çут çанталăк. Этем ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕрчунсен пурнăçĕ. Хĕл илемĕ калавсенче, юмахсенче, ӳнерçĕсен ӳкерчĕкĕсенче сăнланни. «Хĕллехи çут çанталăк» экскурси.

Халăх пултарулăхĕ. Юмахсем, юрăсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Тĕрлĕ халăх юмахĕсем.

Эпир Улăп йăхĕнчен. Улăп халапĕсем тата ытти халăх халапĕсем.

Çурхи хаваслăх. Çут çанталăк чĕрĕлни. Чĕрчунсен пурнăçĕпе çынсен ĕçĕсем. Ачасен çурхи вăййисем. «Çурхи çут çанталăк» экскурси.

Чăваш халăхĕн паллă çыравçисем. К.Иванов, Н.Шелепи, Н.Илпек, М.Трубина, В.Харитонов, Н. Ижентей, Х. Уяр, Н. Карай сăввисемпе калавĕсем.

Тăванла халăхсен çыравçисем.М. Джалиль, ГабдуллаТукай, Р. Минатуллин сăввисемпе поэма сыпăкĕсем.

Вырăссен чаплă çыравçисем. А.Пушкин, И.Крылов, Л.Толстой, Н. Некрасов хайлавĕсем. Вырăссен хальхи ача-пăча литературин тĕслĕхĕсем. Н. Сладков, Н. Соколов-Микитов, Л. Ковалев хайлавĕсем.

Вĕрентӳçĕ е вĕренекен суйласа илнĕ 5-6 сăвва пăхмасăр вĕренмелле.

Вулав хăнăхăвĕсем. Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр, вăтам хăвăртлăхпа вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ минутра 70 сăмахран кая мар пулмалла (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 80 таран ӳсмелле). Шухăш аталанăвне кăтартакан сăмахсене ансат мелсемпе усă курса палăртасси. Шухăшне тата тĕллевне кура текста тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хулен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе логика тăхтавĕсем туса) вуласси. Сасăпа вуланă чухне харкам вулава асăрхаса пырасси, йăнăш вырăнсене тепĕр хут тĕрĕс вуласа тĕрлетесси. Текстра пĕлтерĕшне уçăмлатмалли сăмахсене харкам тĕллĕнех палăртасси.

Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текстри ĕçсем мĕнле аталанса пынине йĕркипе аса илсе каласси (ансат план тăрăх). Панă ыйтăва хуравлама текстри кирлĕ вырăна тупасси. Текстăн шухăш тĕлĕшĕнчен вĕçленнĕ пайĕсене уйăрасси, вĕрентӳçĕ пулăшнипе текст ятне ăнлантарасси, унăн тĕп шухăшне палăртасси.

Ансат план ăсласси, план тăрăх текст ăшлăхне асăмласа каласа парасси (туллин, кĕскен, суйлавлăн). Вуланине туллин тата суйлавлă каласа панă чух сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси, сăнарлă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, синонимсемпе вырăнлă усă курасси.

Сăнарсене, çут çанталăка сăнласа кăтартнă чух усă куракан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене текстра тупасси. Сăмахăн текстри пĕлтерĕшне ăнланасси. Сăнарсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе хак парасси. Курни-илтни, сăнани çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Каланă шухăша вуласа тухнă текстри тĕслĕхпе çирĕплетесси. Инсценировкăсене хутшăнса роль сăмахĕсене тивĕçлĕ интонаципе вуласси.

Илемлĕ литература жанрĕсен хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем. Юмах (унта тĕлĕнмелле, чăн пурнăçра пулма пултарайман ĕçсем пулса иртеççĕ), юптару (сăнарĕсем – тĕрлĕ чĕрчун, йывăç-курăк, вĕçĕнче вĕрентсе калани пур), сăвă (йĕркисем хăйне евĕр виçеллĕ, йĕрке вĕçĕсем пĕр пекрех янăраççĕ).

Вĕренĕ кĕнекине чухласси, кирлĕ хайлава унăн тупмаллинчи ячĕ тăрăх тупасси, кĕнекене пĕр авторăн калавĕ е сăвви тĕлне уçасси, тема тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне çывăх хайлавсене асăрхасси, текст хыççăнхи ĕçсене харпăр хăй тĕллĕн ăнланса пурнăçласси.

**КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ**

Вулав материалĕ: чăваш, вырăс ытти тăванла халăхсен писателĕсем ачасем валли çырнă 15-20 кĕнеки. «Тантăш» хаçатпа «Çил çунат» журналти материалсем (вĕрентĕçĕ суйласа илнĕ тăрăх).

Вулав тематики: тăван тавралăх илемне сăнлакан, пурнăçа юратма, çут çанталăка упрама, сапăр та тараватлă пулма вĕрентекен, тĕрлĕ халăх ывăлĕ-хĕрĕсен пархатарлă ĕç-хĕлне сăнлакан сăвăсемпе калавсем, пысăкрах калăплă хайлав сыпăкĕсем, юмахсем.

Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси (пĕлĕсем. ăслайсемпе хăнăхусем). Кĕнеке пайĕсене пĕлесси: титул лист, ум сăмах, тупмалли, вĕçĕнче калани. Кĕнеке мĕн çинченнине унăн пайĕсем тăрăх ăнкарасси. Класс тулашĕнчи вулав урокĕ валли кирлĕ кĕнекене шыраса тупасси. Класс тулашĕнче I çур çулта эрнере вăтамран 10-12. II çурçул вĕçĕнче 20-25 страницăран кая мар вуласси. вуласа пĕлнине вĕрентĕçĕ ыйтăвĕсем тăрăх каласа парассиĕ Кĕнекен ятне. авторне аса илме пĕлессиĕ Паллашнă писателĕн 2-3 кĕнекине ас тăвасси. Сĕннĕ кĕнекесен списокĕпе, тема картотекипе усă курасси.

Çĕнĕ литература вăййисем выляма вĕрентесси. Вĕсене класс тулашĕнче те выляттарасси.

**4 класс**

Литература вулав.?Класс тулаш.нчи вулав

(68 сехет)

Литература вулав.

**Вулав карти**? Ку вёл ман Тёван =.р-шыв? Чёваш ч.лхи?Тёван халёхён аваллёх.: ун =инчен калакан ваттисен сёмах.сем: калавсем: сёвёсем: статьясем: пысёкрах хайлав сыпёк.сем?

